# Йытăпа кушак.

Манăн йытăпа кушак пурţţĕ.

Йыттине «Хам-хам», тесе йăхăратăмţĕ, кушаккине—«Кăс-кăс», тесе.

Епĕр виçсĕмĕрте пĕр пӳртре пурăнаттăмăрţţĕ: Кăс-кăс—кăмака çинţе, хам-хам—сакайĕнţе, епĕ—сак çинţе.

Хĕл каççан пирĕн виççĕмĕрĕнте çимелли пĕтрĕ.

Кăс-кăс кăмака çинţен сиксе анţĕ те мана:

—Есĕ мана йуратмастăн, выçă вĕлерессщĕн, тет.

Епĕ уна хирĕç:

—Кăс-кăс, терĕм, хам та выçă выртатăп, сан валли кăмака хыçĕнţе кушакайăксем (шăшисем) ţупса çӳреççĕ, çавсене тытса çи, терĕм.

Кăс-кăс мана:

—Мррр! Ху çи—терĕ те çилленсе тухса карĕ.

Уна илтрĕ те сакайĕнţен Хам-хам тăрса тухрĕ.

—Йуратнă хуçам, ман хырăм выçĕçке, тет Хам-хам.

—Выçă пулĕ те, çавах мĕн тăвăпăр ĕнтĕĕ, тусăм? терĕм епĕ йытта — Авă кăмака айĕнţе йĕке хӳресем туй гăваççĕ, çавсене тытса çи, терĕм.

Хам-хам пĕре вăрăмăн хурланса йаţĕ те, урăх пĕр сăмах та шарламарĕ. Тепĕр хут сакайне кĕрсе выртрĕ те, тухмарĕ.

Хам-хам вилţĕ. Хветке.

## 1. Шăпăр.

— Мим-мим Микита,
Микитанăн шăпăрне
Йыт çĕклесе кайнă, тет;
— Тат-тат Татйана,
Татйананăн варпуçне
Кушак ţавса кайнă, тет...

## 2. Ӈаӈапа амăшĕ

— Анне! Ку мĕн?
— Хуплу, Ӈаӈа, хуплу.
— Хуплупа мĕн тăван?
— Кăмакана лартса пĕçеретĕп.
— Кăмакана лартса пĕçерсе мĕн тăван?
— Пиçсе тухсан апат çиме.
— Апатне кама çитерен?
— Ӈаӈана çитерес, Ӈаӈана.
— Апаţĕ тутлăи?
— Ту-утлă... Сан пекех, Ӈаӈа.
— Хи...: Апла пулсан епĕ хуплуне çийетĕп ..

Хветке.